27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
22
ЭРНЕКУН
249(6744) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ХАЛĂХ УЧИТЕЛĔН ПАРХАТАРЛА ĔÇĔ

Пирĕн партипе совет правительстви куллен тимлĕн тăрăшнипе пула, совет шкулĕ вуншар тата çĕршер пин çамрăксене хамăрăн Тăван çĕршыва чĕререн юратакан ывăлсем пулма воспитани парса ÿстерет. Совет çамрăкĕсен паха енĕсем Отечественнăй вăрçă çулĕсенче пиххăçанхинчен те ытларах палăрчĕç. Совет çамрăкĕсем хăйсем Тăван çĕршыва, халăх ĕçне вĕçĕмсĕр парăнса тăнине фронтсенче паттăррăн çапăçнипе, тылра хастарлăн ĕçленипе çирĕплетсе параççĕ. «...Пирĕн мухтавлă çамрăксем тунă паттăрла чаплă ĕçсем ялаплăхах историе кĕрсе юлаççĕ» (Сталин).

Хĕрлĕ Çар офицерĕсемпе боецĕсем Отечественнăй вăрçăра тунă çĕнтерÿсен чысĕпе, тылри çамрăксен пархатарлă ĕçĕпе совет учителĕ те тивĕçлипе мухтанса савăнма пултарать. Учитель Тăван çĕршыва юратма вĕрентнĕ çамрăк патриотсем, хăйсен пиччĕшĕсемпе тата ашшĕсемпе пĕрле, совет çĕршывне нимĕç захватчикĕсенчен тасатса çитерчĕç, халĕ ĕнтĕ çĕнтерÿ ялавне Германипе Венгри, Чехословаки çĕрĕсем тăрăх çĕклесе пыраççĕ.

Совет çамрăкĕсем хăйсене çирĕп те паттăр пулма воспитани парса ÿстернишĕн Сталин юлташа, большевиксен партине, совет влаçне тав тунипе пĕрлех, учительсене те тав тăваççĕ. «Юрататăп эпĕ Тăван çĕршыва, чăваш халăхне, хам çуралнă яла, мана вĕрентнĕ учительсене, пĕрле вĕреннĕ юлташсене,—тесе çырать чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ Совет Союзĕн Геройĕ Орлов юлташ.—Пĕтĕм чун-чĕререн юрататăп эпĕ совет влаçне, Сталин Конституцине, Сталин аттене... Мана совет влаçĕ çитĕнтерсе çунатсем пачĕ». Çак сăмахсенче—мĕнпур çамрăксен шухăш-кăмăлĕсем. Чăваш халăхĕн ывăл-хĕрĕсене 25 çынна Совет Союз Геройĕн ятне, темиçе пин вонна орденсемпе медальсем панă, çакăншăн вара пĕтĕм халăхпа пĕрле, пирĕн учительсем тулли кăмăлпа савăнма пултараççĕ.

Пирĕн Тăван çĕршыв, учительсен ĕçне пысăка хурса хакласа, вĕсене чысласа мухтать. Малта пыракан нумай учительсене тава тивĕçлĕ учительсен ятне панă. Нумай пулмасть, СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, РСФСР ти учительсене орденсемпе медальсем парса наградăланă. Наградăланисем хушшинче пирĕн республикăри педагогика мастерĕсен ячĕсене те куратпăр. Куславкка районĕнчи Пăрмасри пуçламĕш шкул заведующине Александр Терентьевич Некрасова, Тăвайри вăтам шкулти учительницăна Анастасия Моисеевна Тимофеевăна Ленин орденĕпе, ытти нумай юлташсене орденсемпе медальсем парса наградăланă. Вĕсем пурте çамрăк ăрăва çирĕп пĕлÿпе воспитани парассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Партипе правительство, совет халăхĕ шкул умне çĕнĕ те пысăк ыйтусем лартаççĕ. Шкулсенче вĕренÿпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе юлашки çулсенче кăна нумай мероприятисем йышăннă. СССР Совнаркомĕ «Шкулсенче вĕренÿ пахалăхне лайăхлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлени уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пуçламĕш, ĕнчĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакансене экзамен тытармалла тунă. Çак постановлени учительсем çине государство пысăк шанăç хунине кăтартса парать, учительсен авторитечĕпе прависене ÿстерет.

Совет шкулĕнче ачасене пĕлÿпе воспитани парас ĕçе тата та çÿллĕ пусăма çĕклеме кирлĕ условисемпе майсем пирĕн пĕтĕмпех пур. Анчах та хăшпĕр районсенче партипе правительство вĕрентÿпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă мероприятисене çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ-ха. Чылай районсенче пурне те вĕрентмелли закона пурнăçламаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнче 87 ачана вĕренĕве явăçтарман. Çав районри Питĕркасси ялĕнче кăна 11 ача вĕренме çÿремеççĕ. Апла пулин те, шкул директорĕпе учительсем те, ялсовет исполкомĕ те ачасене шкула явăçтарма тăрăшмаççĕ. Уйпуçĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта, учительсем çитмен пирки, аслă классенче вĕренекенсем эрнере 30—35 сехетшер çеç вĕренеççĕ. Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулта вĕренÿ пахалăхĕ начар. Унта 10-мĕш класра пур предметсемпе те ĕлкĕрсе пыракансем пĕр ача та çук. Кун пек фактсене ытти районсенче те курма пулать. Вĕсем, пуринчен ытла, çав шкулсенчи учительсем, комсомол организацийĕсем вĕренекенсем хушшинче дисциплинăна çирĕплетессишĕн, ачасене шкулти йĕркене пăхăнма хăнăхтарассишĕн тимлĕн ĕçлемен пирки, çутĕç органĕсем шкулсене сахал пулăшнă пирки пулаççĕ.

Шкулсене партипе совет тата комсомол организацийĕсем енчен пулăшса тăрассине те тĕпренех лайăхлатни кирлĕ. Пуриншĕн те паллă, вĕрентÿпе воспитани ĕçне тĕрĕс йĕркелесси вĕренекенсемпе учительсем валли тивĕçлĕ условисем туса панинчен нумай килет. Çапах та хăшпĕр ялсоветсемпе райсовет исполкомĕсем, партипе комсомол организацийĕсем çав ĕç çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Пăрачкав районĕнчи Коровинскри шкулта вутă пулман. Мĕншĕн тесен ялсовет та, шкул руководителĕсем те вутă турттарас ĕçе хакламасăр тăраççĕ. Партипе комсомол организацийĕсем çав ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен ĕçĕнче те çитменлĕхсем сахал мар.

Партипе правительство шкул ĕçĕ, халăх учителĕн ĕçĕ çине ленинла пăхма, сталинла пăхма вĕрентеççĕ. Пархатарлă та чыслă ĕçе пурнăçа кĕртсе пыма учительсене пулăшасси—партипе совет тата комсомол организацийĕсен кулленхи тивĕçĕ пулса тăрать. Учительсене лайăх ĕçлеме условисем туса памалла, уйрăмăнах çамрăк учительсене вĕрентесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Шкул ĕçне хакламаннине тĕпренех пĕтерес пулать. Комсомол организацийĕсем çинче пысăк ответлăх тăрать. Вĕсен хăйсен пĕтĕм ĕçне вĕренÿ ĕçне лайăхлатма, ачасене дисциплинăна пăхăнма, типтерлĕ пулма, лайăх вĕренсе пыма пулăшас май организацилемелле.

Хĕллехи каникул вăхăтĕнче учительсен районсенчи канашлăвĕсем пулса иртеççĕ. Вăл канашлусенче учительсене вĕренÿ пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе çул кăтартса памалла. Çавăнпа та канашлусене ирттерме пур енчен те тĕплĕн хатĕрленмелле.

Учительсемпе çутĕç работникĕсем хăйсен ĕçне тата та ытларах лайăхлатса пыни, партипе совет тата комсомол организацийĕсем шкул ĕçĕшĕн вăйлăнрах тăрăшни совет шкулĕ умне государство лартнă пысăк задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме май парĕ.

Çуракине большевикла кĕтсе илер!

КРАСНОАРМЕЙСКИ МТС-ĕ ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАСА ПĔТЕРЧĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 21-мĕшĕ (Телефонпа, хамăр корр.). Красноармейски МТС-ĕ тракторсене юсамалли çулталăк планне декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 100 процентпех тултарчĕ. Пĕтĕмпе 38 трактор юсанă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçал тракторсене юсас ĕçе 16 кун маларах вĕçленĕ. Тракторсене юсас ĕçре уйрăмăнах Николаева, Егоров, Павлов, Степанов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем лайăх ĕçленĕ, вĕсем хăйсен тракторĕсене планпа пăхнинчен нумай малтан, лайăх пахалăхпа юсаса пĕтернĕ.

С. ШАДИН.

Трактористсен ăмăртăвĕ

ИШЛЕЙ. Çак кунсенче МТС-ра ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре çамрăк трактористсемпе бригадăсем хушшинче пынă социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене тата тракторсене юсас ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе яврĕç.

Кĕрхи çĕртме тунă çĕре МТС-ри пур бригадăсемпе çамрăксем те активлăн хутшăннă. Уйрăмăнах Елахов бригадинчи Н. Семенова юлташ паха тĕслĕхсем кăтартнă. Вăл план тăрăх 50 гектар сухалас вырăнне 100 гектар сухаланă. Çавăншăн ăна ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ пĕрремĕш преми памалла тунă.

Халĕ МТС-ра тракторсене хăвăрт та лайăх юсас тĕлĕшпе хĕрÿ ĕç пырать. Ку ĕçре комсомолецсемпе çамрăксем хăйсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. И. Васильев, Т. Ефимов, К. Можаров, В. Григорьев тата В. Егоров юлташсен бригадисем тракторсене 1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех юсаса пĕтерме обязательство илчĕç.

Халĕ вĕсем хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртсе ăмăртура мала тухассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Т. ТАБАКОВА.

Шкул ачисем çуракине хатĕрлеме пулăшаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Наратчаккинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекен пĕр тăван Коляпа Миша Ильинсем хăйсене вĕренÿре те, çынсем хушшинче те йĕркеллĕ тыткалаççĕ. Вĕсем шкула пĕр кун сиктермесĕр çÿреççĕ, пур предметсемпе те «отлично» та «хорошо» вĕренсе пыраççĕ.

Коляпа Миша колхозра та тăрăшса ĕçлеççĕ. Кăçалхи çул Коля 181 ĕçкунĕ, Миша—173 ĕçкунĕ тунă. Çак ĕçкунĕсем çине вĕсем аванс шучĕпе кăна 560 килограмм тĕштырă, 1.946 килограмм çĕрулми илчĕç.

Халĕ вĕсем, вĕреннĕ хушăрах, колхоз валли кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл пухма тытăнчĕç. Ку таранччен 1.5 центнер кĕл пухса хатĕрленĕ. Хастар пионерсене ĕçре те, вĕренÿре те мухтаççĕ.

И. АНДРЕЕВ.

Вăрлăхлăх клевера çывăх кунсенчех шĕкĕлчесе пĕтермелле

Иртнĕ çуракинче пирĕн республика нумай çул хушши ÿсекен курăксем акмалли плана тултараймарĕ. Чылай районсенче вăрлăхлăх клевера вăхăтра пухса кĕртмен тата çапса шĕкĕлчемен пирки пысăк тăкаксем пулчĕç. Çавăнпа клевер вăрлăхĕ çитмерĕ.

Кăçал республикăри чылай колхозсем клевер тата люцерна вăрлăхĕсене нумай туса илчĕç. Вăхăтра тата пĕлсе пуçтарса кĕртнĕ пулсан, колхозсем кăçал килес çул акма курăксен вăрлăхне çителĕклĕ хатĕрлеме пултарнă. Анчах та уйрăм районсем вăрлăхлăх курăксене пухса кĕртес ĕçе кирлĕ пек хакламарĕç. Вăл кăна та мар, хăшпĕр колхозсем клевера çапса шĕкĕлчеме те кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Çавна пула курăк вăрлăхĕ хывас ĕç начар пырать. Курăк вăрлăхĕ хывмалли плана пурĕ те 30 процент кăна тултарнă. Курăк вăрлăхĕсене хывасси уйрăмăнах Куславкка, Канаш, Комсомольски, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Первомайски тата ытти районсенче ытла та начар пырать. Çак районсенче курăк вăрлăхĕсене хывмалли плана пурĕ те 22 процента çити кăна тултарнă.

Нумай районсенче хĕле кĕнĕ май, клевер вăрлăхĕсене çапса шĕкĕлчесси пĕтĕмпех чарăнса ларнă. Декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне илсен, пĕтĕм республикипе 2.300 гектар çинчи клевера çапман та, шĕкĕлчемен те, вăл шутран Йĕпреç районĕнче 104 гектар, Калинино районĕнче 165 гектар, Канаш районĕнче 135 гектар, Октябрьски районра 123, Тăвай районĕнче 175, Пăрачкав районĕнче 261 тата Вăрмар районĕнче 342 гектар çапса шĕкĕлчемен.

Çак районсенчи çĕрĕç органĕсем клевера çапас тата шĕкĕлчес ĕçе хăвăртлатас вырăнне, вĕсем çак ответлă ĕçрен пăрăнса тăраççĕ, ответлăха туймаççĕ. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ те çак паха ĕçе ертсе пыма пăрахнă. Чылай районсенчи партипе совет органĕсем çак ĕç колхозсенче мĕнле пынине тĕрĕслеме тата çĕрĕç органĕсене контроллесе тăма чарăннă.

Вăрлăхлăх клевера çапас тата шĕкĕлчес ĕçе текех тăсса пыма юрамасть. Çĕрĕç органĕсем вăрлăхлăх курăксене çапассине тата шĕкĕлчессине конкретнăрах ертсе пыма тивĕçлĕ. Мĕнпур клеверотеркăсене тата клевер шĕкĕлчеме майлаштарнă молотилкăсене ĕçлеттермелле. Анчах та, калас пулать, çакна пур çĕрте те кирлĕ пек туса пымаççĕ-ха. Тăвай районĕнче клевер шĕкĕлчекен машинăсем час-часах ĕçлемесĕр лараççĕ, çавна пула вĕсен колхозран колхоза çÿремелли маршручĕсем пăсăлаççĕ. Машинăсемпе туллин усă курнă вăхăтрах алăпа шĕкĕлчессине те организацилемелле. Çак ĕçре ĕçлекенсене хавхалантарса пырас шутпа, шĕкĕлчесе тасатнă кашни пĕр килограмм клевер вăрлăхĕшĕн 2-шер килограмм тĕштырă памалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен çак паха та ответлă ĕçе çывăх вăхăтрах пурнăçлас тесе кирлĕ мерăсем йышăнмалла.

Курăк вăрлăхĕшĕн кĕрешни—тырă тухăçлăхĕшĕн тата выльăх апачĕшĕн кĕрешни пулнине тĕплĕн ăнланса илмелле.

Г. ТИМОФЕЕВ.

Лайăх вăрлăх хатĕрлеççĕ

ВĂРНАР. Вăйлă тырпул туса илес ĕçре вăрлăх пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна пирĕн районри колхозсем лайăх ăнланса илнĕ. Акă, Утарти «Трактор» колхоза илер (председателĕ—Евдокимов юлташ). Çак колхоз 1944-мĕш ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татрĕ тата Хĕрлĕ Çар фондне плантан ирттерсе темиçе çĕр пăт тырă тата пахча-çимĕçсемпе çĕрулми пачĕ. Колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх икшер килограмм тĕштырă тата виçшер килограмм çĕрулми валеçсе парать.

Халĕ колхозра 1945 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн тимлĕн кĕрешеççĕ. Вăрлăхсене сортлама, ялхуçалăх машинисене юсама, уя тислĕк кăларма тытăнчĕç. Халĕ çуркунне акма кирлĕ вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех сортласа хунă. Лабораторире тĕрĕсленĕ хыççăн вăрлăхсен пахалăхĕ питĕ лайăх пулни палăрнă.

Çавăн пекех Киров ячĕпе тăракан колхозра та (председателĕ В. Кузьмин юлташ) вăрлăхсем сортлас тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ. Кунта вăрлăхсене сортлама ятарласа звено организациленĕ. Звенона вăтă колхозница стахановка Анастасия Ермошкина юлташ ертсе пырать. Звено членĕсем Е. Евграфова, Елена Выш, Г. Ермошкин юлташсем нормăна кулленех 150—200-шер процент тултараççĕ. Вĕсем халĕ çуркунне акма кирлĕ 490 центнер вăрлăха сортласа пĕтерчĕç те ĕнтĕ. Вăрлăхсен пахалăхĕ лайăх

Вен. ШАХАЛОВ.

Техникăллă культурăсене парса татмалла

Государствăна техникăллă культурăсем парса татни пысăк ĕç пулса тăрать. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Путь Ленина», «Радио», «Совет», «Агроном», Карл Маркс ячĕпе тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем сÿс-кантăр памалли плана ытлашшипех тултарнă. Анчах «Прогресс», «День урожая», «Красный Чутай», «Красный маяк», «Красный Таганаш» колхозсем çак вăхăта çитсе те государствăна пĕр çурăм сÿс-кантăр та, пĕр килограмм кантăр вăрри те паман. Государствăна сÿс-кантăр парса татассишĕн тивĕçлипе кĕрешмелле.

З. ДОЛГОВА.

Коммунистсен районри пухăвĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, декабрĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Кунта коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладĕпе приказа пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе парти организацисем умĕнче тăракан задачăсем çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ А. Митрофанова юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн прение 15 çын тухса калаçрĕç. Докладчик тата тухса калакансем вырăнти промысленноçпа промысла коопераци артелĕсем социализмлă ăмăртăва анлăн хутшăнса, çулталăкри плана ирттерсе тултарнине палăртрĕç. Сĕнтĕрвăрринчи эрех завочĕн коллективĕ продукци туса кăлармалли плана ноябрĕн 27-мĕшĕ тĕлне 102 процент тултарнă, пĕр браксăр ĕçленĕ, 4 процент топливо перекетлесе хăварнă. «Лесоруб» промартель, Шуркассинчи промкомбинат, «Вышивка», «Вперед», «Труд» артельсем тата район центрĕнчи промкомбинат 11 уйăхри производство планне пур енĕпе те декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 106—131 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе 107—216 процент тултарнă.

Районри колхозсем кăçалхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленĕ. Пур колхозсем те тырпулсене вăхăтра пухса кĕртнĕ, вăхăтра авăн çапса пĕтернĕ. Халĕ колхозниксем çитес çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Малта пыракан «Красная Армия», «Наркомюст», «Социализм» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсем кирлĕ таранах вăрлăх хатĕрленĕ, вĕсене сортласа тасатнă, ялхуçалăх машинисене юсанă, уйхире тислĕк чылай кăларнă.

Çавăн пекех районри колхозсем общеставăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те начар мар ĕçленĕ. Ольдикасси, Сучево, Шуркасси ялсовечĕсем пур тĕрлĕ выльăхсем енĕпе те плана 109—130 процент тултарнă. Чылай колхозсем укçа-тенкĕ пухас, чугун çул транспорчĕ тата район валли вутă турттарас тĕлĕшпе плана ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр предприятисем çулталăкри плана 55 процент таран çеç тултарнă. Вăл шута судоверфь, Ивановăри кирпĕч завочĕ, «Крестьянский кузнец», «Портной», «Социализм», «Парижская коммуна» артельсем кĕреççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçре те çитменлĕхсем чылай. Хăшпĕр колхозсем вăрлăх хатĕрлес тата ăна сортласа тасатас, ялхуçалăх машинисене юсас, хире тислĕк кăларас тĕлĕшпе юлса пыраççĕ. «Красная звезда», «Трактор», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем çак таранччен те çителĕклĕ вăрлăх хатĕрлемен. Машинно-тракторнăй станци декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕр трактор, пĕр ялхуçалăх машини те юсаман.

Коммунистсен районри пухăвĕ общеставăллă выльăхсем ĕрчетес, чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕн ĕçлеме кирлине палăртрĕ.

Ф. ИЛЬИН.

Финлянди Совет Союзне хирĕç вăрçнипе тата Совет çĕрне оккупациленипе пула ăна сиен кÿнине саплас шутпа Финлянди Совет Союзне таварсем тăратасси çинчен ССР Союзĕн Правительствипе Финлянди Правительстви тунă килĕшÿ

Совет Союзĕпе Финлянди правительствисем 1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче перемири çинчен тунă Килĕшĕвĕн 11-мĕш статьипе пурнăçлассине çинчен калаçнă хыççăн 1944 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче Хельсинки хулинче Килĕшÿ тунă. Çав килĕшÿре Совет Союзне хирĕç вăрçнипе пула тата совет çĕрне оккупациленипе пула Финлянди Совет Союзне сиен туннне саплас тамашкăн Финлянди Совет Союзне таварсем тăратасси çинчен калана.

Килĕшĕвĕн 11-мĕш статьинче, Америка долларĕсемпе шутласа, 300 миллион долларлăх таварсем тăратмалла, тенĕ. Çав сумăна халь çапла валеçнĕ: 175 миллион долларлăх тĕрлĕ машина оборудованийĕ, тинĕсре юханшыв çинчи тĕрлĕ суднăсем тăратмалла, 125 миллион долларлăх—йывăç материалĕсем, хут, целлюлоза тата кабель продукцийĕ памалла. Çав таварсене 1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа 1950 çулхи сентябрĕн 19-мĕшне çитиччен тăратмалла, урăхла каласан, 6 çул хушшинче çуллен 50-шар миллион долларлăх тăратмалла.

Турттарса килнĕ таварсен хакне 1938 çулхи тĕнчери хаксем тăрăх, Америка долларĕсемпе шутламалла, çав хаксене вара суднăсемпе оборудовани тăрăх 15 процент, ытти таварсем тăрăх 10 процент ÿстермелле. Килĕшÿре турттарса килмелли таварсене тата вĕсене илсе килмелли вăхăта тĕплĕн кăтартса панă. Килĕшÿ çине алă пусас пирки пынă калаçура икĕ енĕ те пĕр-пĕрне лайăх ăнланни палăрнă.

Килĕшÿ çине Совет Правительстви хушнипе А. А. Жданов генерал-полковник, Финлянди Правительстви хушнипе премьер-министр Паасикиви господин, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Энкель господин тата суту-илÿпе промышленность министрĕ Гартц господин алă пуснă.

РУМЫНИРЕН МАТЕРИАЛСЕМПЕ ОБОРУДОВАНИЕ КАЯЛЛА ИЛСЕ КИЛЕÇÇĔ

ОДЕССА, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсемпе румын оккупанчĕсем хăй вăхăтĕнче илсе кайнă оборудованипе материалсен пĕр пайне халь Румынирен Одессăна каялла илсе килнĕ. Вăл япаласене «Сызрань», «Терек», «Одесский горсовет» тата «Райкомвод» ятлă пароходсемпе илсе килнĕ.

Одессăри «Кинап» завочĕн (апсăр плен-кăллă киноаппарат завочĕн), кино фабрикин, «Красный сигнал», «Медицина оборудованийĕ» ятлă заводсен тата кĕленче завочĕн оборудованин пĕр пайне каялла таварса панă. Çавăн пекех тата ялхуçалăх машинисен пĕр пайне те илсе килнĕ. Вăл шутра—1.000 плуг, сÿресем, тракторсен запаслă пайĕсем. Одессăри опера театрĕн нотисене 21 ещĕк илсе килнĕ.

ВЫИГРЫШСЕН ВЫЛЯВĔ

Декабрĕн 17-мĕшĕнче Мускавра Виççĕмĕш Пятилетка Заемĕн (виççĕмĕш çулхи кăларăм) 16-мĕш выляв̆ĕ пулса иртнĕ. Вылявра 134.743.200 тенкĕлĕх 846.400 выигрыш пулнă.

(ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем Чехословакире Кошице хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн сăртлă-вăрманлă вырăнти инженери чăрмавĕсене çĕмĕре-çĕмĕре, ДАВИДОВ, ЦАБОВ, БАЧКОВ, ДАРГОВ, КЕРЕСТУР, НОВОЕ МЕСТО, СИЛВАШ, СЛАНСКА ГУТА, СКАРОШ, НАДОШТЬ ялĕсене тата КАЛША чугун çул станцине тытса илнĕ. Ку районра пирĕн çарсем декабрĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа 18-мĕшне çитиччен пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсемпе венгерсен 2.044 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах КОШИЦЕ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, Чехословакире СЕНЬЯ, ПЕРИНА, ВИШНИЙ ЛАНЦ, НИЖНИЙ ЛАНЦ, ЖАРНОВ, ТУРНЯ, ДВОРНИКИ, ГРГОВ, ЯБЛОНЦА, СИЛИЦА, БОЗОВА ялĕсене тата МИГЛЕЦ, ТУРНЯ чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

Венгерсен МИШКОЛЦ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Чехословакире КАЛИК, МЕХИ, ФИГА, РУМИНЦЕ, ВЕСЬКА, РАДНОВЦЕ, ЦАКОВ, ХАНАВА, ИВАНИЦЕ, ЗАДОР, ЧИЗ, ЛИНГАРТОВЦЕ, ИЕНЭ ялĕсене туртса илнĕ. Ку районра пирĕн çарсем декабрĕн 18-мĕшĕнче нимĕçсемпе венгерсен 1.600 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Венгри çĕрĕнче пирĕн çарсем ДЬЕНДЬЕШ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ОТХАЗХУТА, АЛШХОУТА ХАСНОШ, ТАР МАТРА-БЕВЕБЕЛИ, ШАМШОНХАЗА, НАДЬ-БАРКАНЬ, ЛУЦИН, НЬИРЕШ ялĕсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

ДЕКАБРĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем венгерсен МИШКОЛЦ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, Чехословаки çĕрĕнче СТАРНА, ТОРНАЛЯ, БЕГИНЦЕ, БАТКА, РИМАВСКА СЕЧ, СУТОР, БЕЛИН, ЯНОШОВЦЕ, ПАВЛОВЦЕ, ГАРМАЦ, МАРТИНОВА, ШИМОНОВЦЕ, ДАРНЯ ялĕсене тата ТОРНАЛЯ, РИМАВСКА СЕЧ чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Декабрĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем ку районра нимĕçсемпе венгерсен 1.010 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Декабрĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 12 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 6 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Венгерсен Мишколц хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем Чехословакире вăйлă çапăçнă хыççăн чугун çул станцийĕ пулса тăракан пысăк яла туртса илнĕ. Нимĕçсем çак халăх пурăнакан пункта вăйлă çирĕплетнĕ, вăл пункт тăшманăн Слана шывĕ çинчи оборонин узелĕсенчен пĕри пулнă. Пирĕн ытти чаçсем, малалла куçса пырса, шоссе çулĕсен узелне—Батка ялне тытса илнĕ. Çавăн пекех тата Римавска Собота хулинчен 5 километрта ларакан Яношовце ялне туртса илнĕ. Кун каçиччен гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 6 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Пĕр чаçри боецсем нимĕçсен 5 хир туппипе зенитнăй туппине, 6 миномета тата боеприпас складне тытса илнĕ.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире нимĕçсен пехоти уйрăм участоксенче çапăçса разведка тума хăтланнă. Пирĕн малти подразделенисем, пăшалсемпе, пулеметсемпе персе, тăшмана сапаласа янă, çавăн чухне 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Совет снайперĕсем икĕ кун хушшинче тăшманăн 85 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Драгунпа Люцкевич снайперсем тул çутăлас умĕн тăшманăн персе тăракан позицийĕсем умĕнче засадăна кĕрсе ларнă. Çав засадăран тăшман тылĕнчен унăн оборонин малти хĕррине пыракан çул лайăх курăнса выртнă. Кун каçиччен Драгун юлташ 5 нимĕçе вĕлернĕ, Люцкевич юлташ—3 нимĕçе.

Пирĕн авиаци, çанталăк начар тăнине пăхмасăр, тăшман çул-йĕрĕсене пыра-пыра çапнă. Киевен тата Альт-юха чугун çул станцийĕсенче нимĕçсен çар хатĕрĕсем турттарса пыракан икĕ эшелонне çунтарса янă.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра пирĕн сывлăшри разведка пĕр фронт çывăхĕнчи чугун çул станцинче тăшманăн 7 эшелонĕ тăнине курнă. Пирĕн штурмовиксен ушкăнĕ, истребительсен ушкăнĕ хÿтĕлесе пынипе, çав станцие тапăннă. Штурмовиксен ушкăнне Совет Союзĕн Геройĕ гварди капитанĕ Евсюков ертсе пынă, истребительсен ушкăнне гварди лейтенанчĕ Шокурнов ертсе пынă. Станци çине пăрахнă бомбăсем нимĕçсен çар эшелонĕсем хушшинче çурăла-çурăла кайнă. Пушар нумай вагона ярса илнĕ. Пушарта вăйлă взрывсем пулнă.

Гварди старши лейтенанчĕн Шаруевăн тата гварди кĕçĕн лейтенанчĕн Зайцевăн летчикĕсем разведкăра çÿренĕ чухне нимĕçсен «Фокке Вульф-190» йышши икĕ истребительне тĕл пулнă. Кĕске вăхăт хушши пынă çапăçура совет летчикĕсем тăшманăн икĕ самолетне те персе ÿкернĕ те хăйсен аэродромне каялла аванах çитнĕ.

* * *

Нимĕçсен 339-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Марсель Биль çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ тинĕс флотĕнче тăраттăмччĕ. Нумаях пулмасть мана Берлин çывăхĕнчи Дэберица ячĕç. Унти сборнăй пункта эпĕ килнĕ чухне 6.000 моряка çити пухăннă. Пире 6 кун хушши пехота ĕçне вĕрентрĕç те Либава хулине ячĕç. Либавăра пĕр кун хушшинче кăна пирĕн 4 хутчен тревога тÿсе ирттермелле пулчĕ. Салтаксем час-çаç кайма автомашинăсем çине ларсан, вырăс самолечĕсем каллех пырса тухрĕç те пирĕн колоннăна атакăларĕç. Çав тери хăраса ÿкнипе йĕркесĕр пăтрашу пуçланса кайрĕ. Самолетсем тапăннипе пула пирĕн ротăра 10 салтак вилчĕ, 28 çынна госпитале яма лекрĕ».

Нимĕçсен 24-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 31-мĕш полкăн 3-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Эдмунд Кип çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ «Уленхорст» ятлă транспорт судни çинче зенитчик пултăм. Нумаях пулмасть судно командине пĕтерчĕç те командăри çынсене пурне те Балтика тăрăхне—пехота чаçĕсене ячĕç. Данциг хулинчен пире тинĕспе ăсатрĕç. Портри моряксем çапла каларĕç: «Эсир хăрушă çула тухса каятăр. Каясса эсир Либава хулине каятăр, анчах та сиртен нумайĕшĕ леш тĕнчене лекеççĕ ĕнтĕ», терĕç. Эпĕ «Бакке» пароход çине ларса кайрăм. Пирĕн хыççăн пыракан транспорт та салтаксем турттарса пычĕ. Либава хулине çитиччен 20 мильăра пире вырăс бомбардировщикĕсем атакăларĕç. Пирĕн суднăна икĕ бомба лекрĕ. Пароход çинче 112 çын вилчĕ, 60 çын ытла аманчĕç. Пирĕн парохода самаях сиенлерĕç, çапах та вăл малалла кайма пултарчĕ. Иккĕмĕш транспортăн телейĕ сывăр пулчĕ. Пĕрремĕш бомба лексенех, вăл шыва путрĕ. Ун çинчи салтаксемпе офицерсем пурте тенĕ пекех пĕтрĕç».

Литва Советлă Социализмлă Республикинче гитлерла захватчиксем тунă тискер ĕçсем çинчен

(Нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе вĕсен хӳрешкисен тискер ĕçĕсене тĕпчесе палăртакан Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтернинчен)

Литва Советлă Социализмлă Республикине оккупациленĕ хыççăн нимĕç фашисчĕсем Литвана Германи колонийĕ туса хума, Литва халăхне чуралантарма хăтланнă. Гитлер правительствин çак тискер тĕллевĕ пур çĕрте те саратнинче, пĕтĕм пурлăха аркатнинче, Литва халăхĕнчен мăшкăлласа кулнинче, ваттисене, хĕрарăмсене, ачасене, çавăн пекех тата тыткăна лекнисене массăллăн вĕлерниниче палăрать.

Литва ССР-не ирĕке кăларнă хыççăн Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси тĕпчесе тупнă материалсем тăрăх, фашистсем асаплантарса вĕлернĕ çынсене пытарнă шăтăксене чавса кăларса пăхнă тăрăх тата свидетельсем кăтартса панă тăрăх нимĕçсен фашистла бандичĕсем Литвана йышăнса тăнă вăхăтра çав тери тискер ĕçсем туни тата аркатни палăртнă.

* * *

Литвара Совет влаçĕ тунă хыççăн çулталăк хушшинче Литва культурине аталантарма пур условисене те туса панă пулнă. Çĕнĕрен тĕрлĕ шкулсем уçнă, государство филармонийĕ тата халăх пултарулăх çурчĕ уçнă, Вильнюсра художество академийĕ, Каунасра—прикладной искусство институчĕ уçнă. Литвари писательсен, художниксен, композиторсен союзĕсем организациленнĕ.

Литва культурине пĕтерсе хурас тесе, нимĕç оккупанчĕсем хăйсем пырса кĕрсенех Литвари культура учрежденийĕсене тата шкулсене аркатса тăкнă, творчество работникĕсен союзĕсене салатса янă. Вильнюспа Каунас хулисенче нимĕçсем 14 гимназие, 46 пуçламĕш шкула аркатса тăкнă, ытти хуласенче те вĕсем нумай шкулсене аркатнă.

Литва интеллигенцийĕн представителĕсене тискеррĕн хĕсĕрленĕ. Вĕсенчен нумайĕшне пере-пере пăрахнă е ытти майсемпе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Литва ССР-не оккупациленĕ хушăра гитлерла ирсĕрсем юнлă террор режимĕ туса хунă. Хăйсене хирĕç тăрассине пĕтерсе лартас тесе, нимĕçсем совет çыннисене тăтăшах вĕлерсе пынă, вĕсенчен темĕн тĕрлĕ мăшкăлланă, тем тери ирĕксĕрлесе асаплантарнă. Туллимар сведенисем тăрăх, Литвари концентрациллĕ лагерьсенче вĕсем тыткăна лекнĕ 165.000 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, мирлĕ халăх хушшинчен 300.000 çынна ытла персе пăрахнă, çунтарса янă е асаплантарса вĕлернĕ.

Литва ССР-ĕн столицине Вильнюса тытса илсенех нимĕç оккупанчĕсем столица халăхне массăллăн вĕлерме тытăннă. Панеряй (Понары) ятлă местечкăра, Вильнюсран 8 километрта лараканскерте, вĕсем ятарласа лагерь тунă. 1941 çулхи июль уйăхĕнчех çав лагерьте çынсене массăллăн вĕлерме пуçланă та Хĕрлĕ Çар тавăрăначчен кашни кун тенĕ пекех вĕлерсе пынă.

Хăйсен юнлă преступленийĕсен йĕрне пытарас шутпа гитлерла палачсем персе пăрахнă çын виллисене çунтара-çунтара янă. Вут çине ретĕн-ретĕн çĕршер виле хурса тухса вĕсене çунакан шĕвекпе сапнă. Свидетельсем каланă тăрăх, кашни кăвайт çинче пĕр вăхăтрах 3.000-шер виле таран çунтара-çунтара янă. 1943 çул вĕçĕнчен пуçласа 1944 çулхи июнь уйăхне çитиччен 9 вилĕ шăтăкĕнчен 100.000 вилĕрен кая мар кăларса, вутра çунтарса янă.

9-мĕш номерлĕ форта Каунас çыннисем «Вилĕм форчĕ» тенĕ. Вăл хуларан çурçĕр-хĕвеланăçнерехре 6 километрта ларать. Вăл форт тимĕрпе бетонран тунă нумай казематлă кивĕ крепость евĕрлĕ. Унта лекекенсенчен никам та чĕрĕ юлман. Темиçе пин çынлă колоннăсене—хĕрарăмсемпе ачасене, çамрăксене, арçынсемпе ваттисене çав форта илсе пырса, вĕсене унта пере-пере пăрахнă тата çунтара-çунтара янă.

Нимĕçсем совет гражданĕсене çаппа-çарамаслантарнă, унтан 300-шер çынлă ушкăнсем туса, малтанах чавса хатĕрленĕ шăтăксем патне илсе пынă та автоматсемпе тата винтовкăсемпе персе вĕлернĕ. «Вĕлерме илсе пынă çынсем çав тери йышлă пулнипе,— каласа парасçĕ свидетельсем,— вĕсен вилĕме кĕтсе, сивĕре çаппа-çарамас темиçешер сехет тăмалла пулнă». 1941 çулхи декабрь уйăхĕнчи икĕ кун хушшинче кăна 9-мĕш номерлĕ фортра мирлĕ совет гражданĕсене 22.000 çынна яхăн персе пăрахнă. 1943 çулхи октябрь уйăхне çитиччен гитлеровецсем унта 50.000 çын ытла пĕтерсе тăкнă, вĕсенчен 40.000 çын ытла—совет гражданĕсем, 10.000 çынна яхăн—ют çĕршыв çыннисем пулнă. Хăйсен преступленийĕсен йĕрне пытарас тесе, гитлеровецсем 1943 çулхи октябрьтен пуçласа хăйсем вĕлернĕ çынсен виллисене юри хунă вутра çунтарса яма пуçланă. Чĕрĕ çынсене те нимĕçсем вутра çунтара-çунтара янă. Гельтрунк свидетель каласа панă тăрăх, 1943 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче 9-мĕш номерлĕ фортра Шапиро доцентăн 5 çынтан тăракан çемьине чĕррĕнех вутра çунтарса янă. Гедрайц ялĕнчи гражданин Н. Ф. Корольков свидетель çапла каласа панă: «Кăнтăр кунĕнчех çынсене хупă машинăсемпе илсе пыратчĕç те вĕсене вутта пăрахатчĕç. Час-часах сухăрашнă сасăсем тата пăшал сассисем илтĕнетчĕç», тенĕ.

Фашистла ирсĕрсем Каунас хулинче тунă преступленисене тĕпчекен Комисси палăртнă тăрăх, 9-мĕш номерлĕ фортра гитлеровецсем 70.000 çын ытла пĕтерсе тăкнă.

Литва ССР-ĕнче гитлеровецсем вырăнти халăха кăна мар, Орел, Смоленск, Витебск тата Ленинград облаçĕсенчен хăваласа килнĕ халăха та пит нумай пĕтернĕ. Алитус хули çывăхĕнчи эвакуациленĕ халăха лагерĕ витĕр 1943 çулхи çулларан пуçласа 1944 çулхи июнь уйăхĕччен 200.000 çын ытла тухнă. Лагере хупнисене йывăр ĕçпе асаплантарнă, выçă тарăхтарнă. Санитари гĕлĕшĕпе тӳсме çук йывăр условисене пула, халăх çав тери йышлă пулнипе, çителĕклĕ шыв паманнипе, выçă пурăннипе, тĕрлĕ чир-чĕрсенчен, çавăн пекех тата массăллăн пере-пере пăрахнипе çав лагерьте 14 уйăх хушшинче 60.000 мирлĕ совет çыннине яхăн пĕтнĕ.

1944 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче гитлеровецсем Тракай уездĕнчи Перчюпа ялне пырса кĕнĕ. Пĕтĕм яла çаратса тухнă хыççăн пур арçынсене те пĕр çурта, хĕрарăмсемпе ачасене урăх виçĕ çурта хăваласа хупса хунă та вăл çуртсене вут чĕртсе янă. Çăлăнса тухса тарма хăтланнă çынсене фашистла ирсĕрсем тыта-тыта каллех вутта пăрахнă. Çапла вара ялти пĕтĕм халăха—119 çынна, вăл шутран 21 арçына, 29 хĕрарăма тата 69 ачана — çунтарса янă.

Мариамполь, Тракай, Паневежис, Укмерге тата ытти хуласенчи мирлĕ çынсене те нимĕç оккупанчĕсем тискеррĕн вĕлерсе пĕтернĕ.

Тыткăна лекнĕ совет çыннисен лагерĕсенче çынсенчен çав тери мăшкăлланă, вĕсене хытă асаплантарнă. Нимĕç салтакĕсемпе конвоирĕсем тыткăна лекнисене мĕн тăвас тенĕ çавна тума пултарнă.

Каунас аэродромĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри лагерьте халран кайнă тыткăна лекнĕ çынсене, утса çӳреме те пултарайманскерсене, кашни кунах лагерь хыçне илсе тухса, малтанах хатĕрлесе хунă шăтăксене чĕррĕнех пăрахса, тăпра витсе хунă. Çавăнта ĕнтĕ тыткăна лекнĕ 10.000 совет çыннине асаплантарса вĕлернĕ. Алитус хули çывăхĕнчи лагерьте персе пăрахнипе, выçăпа, сивĕпе тата тиф чирĕпе вилнисен шучĕ 35.000 çынна çитет.

1941 çулхи кĕркунне нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Науиси Вильня хулинчи çар городокĕн территорийĕнче тыткăна лекнĕ совет çыннисем валли лагерь организациленĕ. Нумай свидетельсем каласа панă тăрăх Комисси çакна палăртнă: çав лагерьте тыткăна лекнĕ совет çыннисене выçă усраса, тӳсме çук йывăр ĕçлеттерсе, асаплантарса тата пере-пере пăрахса, йышлăн вĕлерсе пынă. Гитлеровецсем унта 60.000 çынна ытла асаплантарса вĕлернĕ.

* * *

Гитлеровецсем Литва хресченĕсен ялхуçалăхне аркатса тăкнă. 1940—1941 çулсенче 75.000 çынна ытла—ялхуçалăх рабочийĕсене, çĕрсĕр тата сахал çĕрлĕ хресченсене — çĕр участокĕсем парса тухнă пулнă, вĕсене çуртйĕр тума кивçен укçа панă пулнă, ялхуçалăх инвентарĕ, оборудовани тата вăрлăх панă пулнă. Çапла вара, республикăри ялхуçалăхне аталантармашкăн никĕс хывса панă пулнă.

Фашистла колонизаторсем ĕçхресченĕсен çĕрне часах тытса илнĕ. Гитлерăн çĕрĕç министрĕ Дарре пĕр вăтанмасăрах çапла каланă: «...Вырăнти вак хресченсене хăйсен çĕрĕсем çинчен хăваласа ярса, вĕсене çĕрсĕр хăварса, пролетарисем туса хумалла, çапла майпа вара вĕсем ĕрчессине чакармалла. Лайăх çĕрсене туртса илсе, нимĕçсен аллине памалла. Пĕтĕм хĕвелтухăçĕнче нимĕçсем кăна шултăра поместисем тытса тăма пултарасçĕ. Ют расслă пурăнакан çĕршыв чурасен çĕршывĕ, ялхуçалăх гэрçисемпе промышленность работникĕсен çĕршывĕ пулса тăмалла».

Литвари ĕçхресченĕсен çĕрĕсене турта-турта илнипе пĕрлех, гитлеровецсем вĕсен выльăх-чĕрлĕхне, пĕтĕм ялхуçалăх инвентарьне туртса илнĕ. Çуртсем тума хатĕрлесе хунă йывăçа та турта-турта илнĕ.

Гитлерла захватчиксем пуç пулса тăнă вăхăтра Литва ССР-ĕнчи 14 уездра кăна выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк хисепĕ, 1940—1941 çулсемпе танлаштарсан, туллимар сведенисем тăрăх та çакăн чухлĕ чакнă: лашасем—136.140 пуç, ĕнесемпе вăкăрсем—565.995 пуç, сыснасем—463.340 пуç, сурăхсем—594.492 пуç, чăх-чĕп—996.000 пуç, хур-кăвакал—424.178 пуç чакнă.

Гитлерла захватчиксем Литва ССР-ĕн промышленноçне те аркатса, çав тери пысăк сиен кӳнĕ. Вĕсем республикăри шултăра электростанцисене сирпĕтсе янă, промышленноçăн пысăк предприятийĕсене аркатса тăкса çунтарса янă.

Каунас хулинче нимĕçсем «Металас» ятлă металлурги заводне, «Спектрас» ятлă оптика фабрикине, «Гума» ятлă резина фабрикине, аш-какай комбинатне, кĕленче заводне, виçĕ çăнăх комбинатне тата икĕ супăнь фабрикине пĕтерсе тăкнă. Вĕсем хăма çуракан заводсен, пир-авăр фабрикисен тата ытти фабрикăсемпе заводсен оборудованине Германие илсе кайнă. Вильнюсра захватчиксем «Электрит» ятлă радиоаппаратура заводне, хăма çуракан тата фанера тăвакан заводсене аркатса тăкнă. Шауляй хулинче вĕсем 6-мĕш номерлĕ чи лайăх тир-сăран заводне, «Ватас» ятлă атă-пушмак фабрикине, талăкра 2.000 мăшăр атă-пушмак туса кăлараканскерне, виçĕ кондитерски фабрикăна, сăра завочĕсене тата çу завочĕсене аркатса тăкса çунтарса янă. Республикăн ытти вырăнĕсенче те нимĕçсем промышленноçăн вак предприятийĕсене тата алăста предприятийĕсене нумай аркатса тăкнă, хуласенчи коммунальнăй хуçалăха пит пысăк сиен кӳнĕ. Электростанцисемсĕр пуçне, Вильнюсра вĕсем газ заводне, шыв уçлакан станцие мĕнпур агрегачĕсемпе пĕрле, Каунасри водопровода аркатса тăкнă. Хула халăхне шывсăр тата çутăсăр тăратса хăварнă.

Литваран тухса тарас умĕн, 1944 çулхи июлĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хуласенчи чи лайăх çуртсене тата общество çурчĕсене сирпĕте-сирпĕте, çунтара-çунтара янă, урамсемпе кварталсене тĕппипех арката-арката пĕтернĕ.

Нимĕç захватчикĕсем республикăри чугун çул хуçалăхне пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Вĕсем вокзалсене, чугун çул çинчи электростанцисене, депосемпе паровозсене юсакан мастерскойсен çурчĕсене, насос станцийĕсене, шыв таптаракан башньăсене, чугун çул кĕперĕсене, 1.000 вагона, 183 паровоза тата ытти нумай япаласене те çунтара-çунтара янă.

Фашистла захватчиксем Литвари хула халăхне йышлăн çаратнă. Хулари чи лайăх çуртсемпе хваттерсене вырăнти халăхран туртса илсе, нимĕçсен граждански чиновникĕсемпе çар чиновникĕсене тата Германирен куçса килнĕ «колонизаторсене» валеçсе панă.

* * *

Гитлерла захватчиксем Литва халăхне хуйхăпа асап пит нумай кăтартнă. Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси Литва Советлă Социализмлă Республикин çĕрĕ çинче тискер преступленисем тунăшăн айăплисене тупса палăртрĕ. Çав çынсем пурте суд умне тăмалла, хăйсен юнлă тискер ĕçĕсемшĕн хаяр ответ тытмалла.

Пирĕн землянсем

Тупă наводчикĕ

Пехотăра Александр Михеев паттăр салтак пулнă. Хаяр çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене сахал мар пĕтернĕ, анчах хăйне те икĕ хутчен амантнă. Çапах та А. Михеев стройран тухман, иккĕмĕш хут аманса госпитальрен сывалса тухнă хыççăн, вăл артиллерие лекнĕ. Малтанхи вăхăтра вăл ещĕксем йăтакан, унтан—аврлакан, каярахпа—перекенĕ пулнă. Кирек мĕнле ĕçе хушсан та, вăл хăйĕн ĕçне юратса тунă, çапăçури мастерлăхне ӳстерсе пыма тăрăшнă. Çавăнпа ăна тупă наводчикĕ туса хунă. Тăшмана тĕл персе тивретесси, пĕр снаряда та сая ямасăр, тăшман çине ӳкересси пĕтĕмпех наводчикран килет. Çакна лайăх ăнланнă вăл, хăй çине пысăк ответлăх хунине туйнă.

Хĕрӳ çапăçу кунĕсем. Нимĕç захватчикĕсем атака хыççăн атака тунă. Пирĕн çарсем, тăшман атакисене сире-сире пăрахса, малалла кайнă. Тăван çĕршыва ирсĕр нимĕçсенчен тасатса пынă. Çакăн пек хаяр çапăçу кунĕсенче А. Михеев наводчик пулса малтанхи хут тупă умне тăнă. Акă, тăшман атакăна тухнă. Александр Михеев тупăпа тăшман çине лайăх тĕлленĕ. Малтанхи снаряда кăларса ярсанах наблюдательнăй пунктран снаряд тĕл ӳкни çинчен пĕлтернĕ. Ун хыççăн пĕтĕм батарея А. Михеев пек пеме пуçланă.

Батарея хăватлăн персе тăнипе тата снарядсем пит те тĕл ӳксе çурăлнипе тăшман атаки пĕтсе ларнă. Çапăçу хирне тăшманăн пĕр ротăна яхăн салтакĕсемпе офицерĕсен вилли выртса юлнă. Çакăн хыççăн Александр Михеева часть командирĕ тав тунă.

Пĕррехинче нимĕçсен «ашакĕ» (пирĕн боецсем нимĕçсен ултă кĕпçеллĕ минометне çапла калаççĕ) Александр Михеев тупписи ăçта вырнаçнине пĕлнĕ пекех ун çывăхнелле персе тăнă. Минăсем çывăхран çывăха ӳксе çурăлнă. Çав «ашака» епле пулсан та пĕтерсе тăкмалла пулнă. Наводчик А. Михеев наблюдательнăй пунктран илнĕ даннăйсем тăрăх лайăх тĕлленĕ те снаряд хыççăн снаряд кăларса яма тытăннă. Хаяр çапăçу пуçланнă. Çав вăхăтра тăшман снарячĕ боеприпас ещĕкĕсем çывăхĕнчех çурăлнă, вут тивсе илнĕ. Хыпса илнĕ вутта сӳнтермесен, хамăр снарядсемех çурăлса сиен тума пултарнă. Наводчик А. Михеев, пĕр тăхтаса тăмасăр, çунакан снаряд ещĕкĕсене сӳнтерме чупнă. Таврара тăшман минисем çурăлса тăнă, ура айĕнчех çунакан ещĕксем кĕрех арканса каяс пек выртнă. А. Михеев ещĕксене пĕрерĕн-пĕрерĕн урăх çĕре йăтса сӳнтернĕ. Çак ĕç питĕ хăвăрт пулса иртнĕ, унăн туппи вăл вăхăтра виç-тăват снаряд çеç кăларса яма ĕлкĕрнĕ.

— Пурте йĕркеллĕ! — лăпкăн каланă вăл юлташĕсем патне пырса. Тăшман çине тата хăвăртрах пеме тытăннă. Часах тăшман миномечĕ тĕлĕнче вăйлă взрыв пулнă, ун хыççăн «ашак» та шăпланнă. Пирĕн пехота атакăна кĕрсе кайса, нимĕçсене вăл вырăнтан хăваласа кăларнă.

Кайран палăртнă тăрăх, Александр Михеев туппи çак хаяр çапăçура 150 ытла нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн тупă наводчикне Александр Михеева командовани III-мĕш степень Мухтав орденĕ парса наградăланă.

Маттур артиллерист, Мухтав орденĕн кавалерĕ Александр Михеев—пирĕн земляк. Вăрçăччен вăл Канаш хулинче электромонтер пулса ĕçленĕ.

Х. ГОРДЕЕВ.

ÇАПАÇУРИ ÇАР.

Хĕвеланăç Европари вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 19-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Тăшман атакăсем тăвакан секторсенче —Моншау хулипе Уншпау хули районĕнче, çавăн пекех тата Германипе Люксембург чиккин кăнтăрти татăкĕнче çаплах йывăр çапăçусем пыраççĕ.

Линних хули районĕнче союзниксен çарĕсем Вурм хулипе Мюллендорф хулине тăшмантан тасататассишĕн çапăçаççĕ. Диллинген хулипе Саарлаутерн хули патĕнче тăшмана тапăнма тунă укреплениссен районĕнче союзниксен çарĕсем çаплах майĕпен малалла куçса пыраççĕ, тăшман укреплениĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Сааргемюнд хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра союзниксем вăрманлă вырăн патне пырса тухнă, халĕ вĕсем Хабкирхен хулинчен пĕр миля çурçĕртерехре тăраççĕ. Бальсхейм тата Медельсхейм районĕнче те хăшпĕр çитĕнӳсем тунă. Битш хули çывăхĕнче союзниксен çарĕсем нимĕçсем хытă хӳтĕлесе тăнă Мажино линийĕн икĕ укрепленине туртса илнĕ. Виссенбург хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксем икĕ миля малалла кайнă, Германири Бунденталь тата Нидершлеттенбах ялĕсене кĕнĕ. Кольмар хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тури Вогез тăвĕсенче пĕчĕк çитĕнӳсем тунă.

Иртнĕ çĕр йывăр бомбардировщиксен хăватлă соединенийĕ тăшманăн Балтика тинĕсĕнчи Гдыня портĕнчи суднисене атакăланă.

ЛОНДОН, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 19-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 8-мĕш арми фронтĕнче Баньякалалле хули патĕнче тата Фаэнца хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çаплах йывăр çапăçусем пыраççĕ. 5-мĕш арми фронтĕнче патрульсем çеç кĕрешнĕ.

Американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, ĕнер Германири, Австрири тата Венгрири вăрçă объекчĕсене тапăннă. Акăлчансен йывăр тата вăтам бомбардировщикĕсем Югославири чугун çулсемпе шоссе çулĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 20-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Моншау хулипе кăнтăр Люксембург хушшинчи районра тăшман наступлени пуçласа янă вырăнта, çаплах çапăçусем пыраççĕ. Моншау хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем тăшмантан Вурм тата Мюллендорф пункчĕсене тасатнă.

Саар шывĕн улăхĕнче союзниксен çарĕсем тăшмантан Диллинген хулине пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тасатса пĕтернĕ, тăшман салтакĕсем завод районĕнче тата хулан хĕвелтухăç пайĕнче кăна юлнă. Саарлаутерн хули çывăхĕнчи укреплени районĕнче союзниксен чăçĕсем малалла кайнă. Саргемюнд хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Гобкирхен тата Вельтхейм пункчĕсенчен кăштах çурçĕрелле куçнă.

Темиçе кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн союзниксен çарĕсем Битш хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Мажино линийĕ çинчи Зимзергофф фортне туртса илнĕ. Çывăхри Шиссек фортĕнче тăшман хытă хирĕç çапăçать. Виссенбург хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре те тăшман хытă хирĕç тăрать. Унта нимĕçсен икĕ пысăк контратакине сирсе янă.

Кольмар хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата Вогез тăвĕсен районĕнче союзниксен çарĕсем кăштах малалла кайнă.

Союзниксен авиацийĕ Германири вăрçă объекчĕсене нумайĕшне вăйлăн тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕнче официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: наступлени пуçласа янă нимĕçсем фронтăн Америка çарĕсем тăракан участокне нумай татса кĕнĕ. Вĕсем 20 миля малалла кĕрсе кайнă. Американецсен хăшпĕр чăçĕсене татса илнĕ. Нимĕçсем Ставело, Консдорф патне тата Сен Вит хулинчен икĕ миля хĕвелтухăçнерехре ларакан тепĕр пункт патне пырса тухнă. Германи енчен Бельгипе Люксембурга çĕмĕрсе кĕрсе кайнă нимĕç танкĕсемпе пехотине хирĕç хăшпĕр пунктсенче Америка çарĕсем часах вăйлăн хирĕç тăма пултарнă, вĕсем нимĕçсене чарса лартнă, çапах та гитлеровецсем халĕ те çаплах хĕсме пăрахман.

Ставело Бельги чиккинчен 20 мильăра, Льеж хулинчен те 20 мильăра ларать. Консдорф Люксембург чиккинчен 5 мильăра ларать, Сен Вит Бельги чиккинчен 5 мильăра, Ставелопа Мальмедирен 11 мильăна яхăн кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларать.

ЛОНДОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 20-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Итали фронтĕнче паллă улшăнусемех пулман, тенĕ.

Союзниксен бомбардировщикĕсен соединенийĕсем ĕнер тăшманăн Австрири, Венгрири, Югославири тата Çурçĕр Италири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет:

Боснире Югослави чăçĕсем Дрина шывĕн сылтăм хĕррине Байна-Башта хулинчен пуçласа Дрина вăррине çитиччен пĕтĕмĕшпех тăшмантан тасатса пĕтернĕ. Зворник хулипе Фриначи хули хушшинчи районра нимĕç дивизийĕн чăçĕсен пысăк группировкине çавăрса илнĕ.

Босна шывĕ улăхĕнче Маглай хулипе Усор хули хушшинче нимĕçсен моторизованнăй колоннине çĕмĕрсе тăкнă.

Черногорире, Колашин хулипе Мойковец хули секторĕнче, çаплах çапăçусем пыраççĕ.

Хорватире, Загреб хули çывăхĕнче, тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан Реметинац ялне туртса илнĕ.

Словенире нимĕç чăçĕсем Сава шывĕ улăхĕнче наступлени тума хăтланнă. Югослави чăçĕсем халĕ нимĕçсен çавăнти чăçĕсемпе çапăçаççĕ.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Британин радио саракан компанийĕн Афины хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англи çарĕсем Афины хулипе Пирей портне çыхăнтаракан çула пĕтĕмĕшпех тасатнă. Афины хулинчи тĕрмене сыхлакан Англи гарнизонĕ, политикăллă ĕçсемшĕн ларакан хăшпĕр çынсене илсе, каялла чакнă. Вăл тĕрмене ĕнер партизансем атакăланă.

Тепĕр корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Англин пысăк вăйĕсем Англин Грецири сывлăш-çар вăйĕсен штабне хӳтĕлекен гарнизона пулăшма тухнă. Çав çарсем гарнизонпа пĕрлешсен, вăл штаба хуларан илсе тухаççĕ пулĕ тесе шутлаççĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Афины хулинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Лондонри радио çакăн çинчен пĕлтерет: Англи самолечĕсем паян листовкăсем пăрахнă. Вăл листовкăсенче Скоби генерал Афины хулипе ун таврашĕнче пурăнакан çынсене çакна асăрхаттарнă: ЭЛАС çарĕсем ыран ирхине 9 сехет тĕлне пеме пăрахмасан, эпир хамăрăн мĕнпур вăйсемпе наступлени пуçласа яратпăр, тенĕ.

Англи çарĕсем хăйсем йышăнса илнĕ çĕнĕ районсене çирĕплетеççĕ. Англин Афины хулинчи сывлăшри вăйĕсен штабне ЭЛАС чăçĕсем акăлчансем çĕнĕ вăйсем илсе пыричченех йышăннă пулнă. Штабра 350 çын шутланнă, вĕсенчен нумайĕшне, çав шутран аманнисене те, пырса çитнĕ çарсем хăйсемпе пĕрле илсе кайнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци премьер-министрĕ Папандреу Греци королĕ патне паян телеграмма янă. Вăл çав телеграммăра Дамаскинос архиепископа Греци регенчĕ туса хума сĕннĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ЯПОНИЕ ТАПАННИ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). США çар министерстви çапла пĕлтернĕ: декабрĕн 17-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепоçĕсен» чылай пысăк ушкăнĕ Ханькоу хули çине (Центрти Китай) бомбăсем пăрахнă. Сайпан утравĕ çинчи «Вĕçекен крепоçсен» пысăк вăйĕсем декабрĕн 18-мĕшĕнче Японин виççĕмĕш пысăк хулине—Нагое хулипе тепĕр хут вĕçсе пырса вăйлăн тапăннă.

ВАШИНГТОН, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар министерстви çакăн çинчен пĕлтернĕ: американецсен Китайри базăсем çинче тăракан «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщикĕсем Кюсю (Япони) утравĕнчи промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ШАНХАЙПА НАНКИНА ТАПАННИ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕн 20-мĕш соединенийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: декабрĕн 19-мĕшĕнче «Вĕçекен крепость» йышши вăйлăран та вăйлă бомбардировщиксем Шанхайпа Нанкина тапăннă. Доксем çине тата механика мастерскойĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахасси ăнăçлă пулса иртнĕ.

Чăваш халăхĕн наци тивĕçлĕхĕ çинчен

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци чăваш халăхĕн наци тивĕçлĕхне нимĕнпе танлаштарма çук çав тери вăйлăн ӳстерчĕ. Вырăс халăхĕпе туслă пурăнас пархатарлă традици, нумай ĕмĕрсем тăршшĕнче çирĕпленсе пынăскер, революци хыççăн татах та ытларах вăй илсе хăватланса кайрĕ.

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, чăваш халăхĕ ирĕке тухрĕ, хăй тĕллĕн аталанса пыма хăйĕн автономине—хăйĕн государственноçне туса хучĕ, хăйĕн ылттăн кĕнекине—Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Конституцине çырчĕ. Унта çапла çырса хунă: «Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики рабочисемпе хресченсен социализмлă государстви пулса тăрать», тенĕ.

Çакă вăл—пирĕн халăх ют çĕршыв захватчикĕсене хирĕç, патша тытăмне хирĕç, помещиксемпе капиталистсен пусмăрне хирĕç нумай ĕмĕрсем хушши вырăс халăхĕпе тата хамăр çĕршыври ытти мĕнпур халăхсемпе пĕрле кĕрешсе пынин результачĕ. Çакă вăл—пĕрлехи кĕрешӳре тунă çĕнтерӳ. Çакă вăл—пирĕн халăхăн хальхи наци тивĕçлĕхĕн никĕсĕ.

Тăван çĕршывра социализмăн хĕвеллĕ çуртне тунă çĕрте чăваш халăхĕ, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем пекех, хăйĕн ĕмĕрхи ĕмĕчĕнлĕхне кăтартса, хăйĕн нациллĕ тивĕçлĕхне çӳлте тытса пырса, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Ленинла—Сталинла наци политикине çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырса, хăйĕн республикине чечеклене кекен республика туса хучĕ. Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче республикăн хăйĕн промышленноçĕ, хăйĕн рабочи класĕ ӳссе çитĕнчĕ. Колхозсене пĕрлешнĕ ĕç хресченĕсем, сталинла индустри панă машинăсемпе усă курса, малта пыракан агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырса, пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе, çĕре тĕпренех çемсетсе çĕнетрĕç. Уннчен хресчен çыннине хăйне тăранма та çимĕç парайман çĕр колхозниксем валли çеç мар, çĕршыв валли те пуян тырпул пама тытăнчĕ.

Чăваш халăхĕ хăйĕн аслă шкулĕсене, хăйĕн литературипе искусствине, музыкипе живописне—хăйĕн нациллĕ совет культурине ӳстерсе çитĕнтерчĕ. Унăн халĕ ĕнтĕ хăйĕн инженерĕсемпе техникĕсем, ученăйĕсемпе врачĕсем, учителĕсемпе агрономĕсем, писателĕсемпе композиторĕсем, артисчĕсемпе художникĕсем—хăйĕн интеллигенцийĕ пур.

Пирĕн халăхăн çак вăрçăра тăшманран хӳтĕлемеллисем нумай пулчĕç. Çавăнпа та Сталин юлташ вăрçă пуçламăшĕнчех пирĕн çĕршыври ирĕклĕ халăхсем умне тухса тăнă хăрушлăх çинчен, хаяр та сĕмсĕр тăшман Совет Союзĕнчи «ирĕклĕ халăхсен нациллĕ культурипе нациллĕ государственноçне пĕтерсе хума» тĕллев лартни çинчен асăрхаттарса, пур халăхсене те фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçăва тухма чĕнсен, пирĕн чăваш халăхĕ те, çĕршыври мĕнпур тăванла халăхсем пекех, Отечественнăй аслă вăрçа çĕкленчĕ: ирĕклĕхшĕн, чыслăхшăн, никама пăхăнманлăхшăн — татах аслă вырăс халăхĕпе пĕрле! Чăваш халăхĕн ывăлĕсем хăйсен тăван халăхĕн наци тивĕçлĕхне вăрçă хирĕсенче çӳлте тытса пыраççĕ, вĕсем фашистла вăрă-хурахсене хирĕç арăслансем пек, ăмăрткайăксем пек паттăррăн çапăçаççĕ.

«Юрататăп эпĕ тăван çĕршыва, хамăрăн чăваш халăхне, хам çуралнă яла. Мана вĕрентнĕ учительсене, пĕрле вĕреннĕ юлташсене. Пĕтĕм чун-чĕререн юрататăп эпĕ совет влаçне, Сталин Конституцине, Сталин аттене. Мана совет влаçĕ çитĕнтерсе çунатсем пачĕ. Ĕлĕк тăлăх ача пулнăскер, кĕтӳç ачи, тĕттĕм чăваш ачи — халĕ летчик-командир. Совет Союзĕн Геройĕ... Тинĕсрен пуçласа тинĕсе çитиччен выртать манăн çул—чăваш ачин çулĕ. Кара-Кум пушхирĕнче, нихăçан та çын пулман çĕрте пултăм эпĕ—чăваш ачи... Чăваш халăхĕн маншăн хĕрелмелле пулмĕ. Анчах ман сăмах çапла: мĕнпур çынсем, пĕчĕккисенчен пуçласа пысăккисем патне çитиччен, фронтшăн ĕçлеччĕр, çапла ĕçлесе, ирсĕр нимĕçе хăвăртрах пĕтерер. Вара вăрçă пĕтсен, курса калаçăпăр. Вара ун чухне орденлă Чăваш республикин халăхĕ лайăх ĕçленĕ тесе пурте калаччăр». Çапла çырать Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов, хăйĕн «Юрататăп эпĕ тăван çĕршыва» ятлă кĕнекинче.

Çирĕм тăватă çул ĕлĕкрех чăвашсен çулăм чĕрелле сăвăçи Çеçпĕл Мишши «Чăваш ачине» ятлă сăвăра «Чăваш ачи, сассуна пар! Тухсам кунта, сана кĕтеççĕ», тесе чĕннĕ. Федот Орлов геройăн çӳлерехре илсе кăтартнă сăмахĕсем Çеçпĕл Мишшине ответлесе каланă сăмахсем пекех илтĕнеççĕ. Чăваш ачисем Отечественнăй вăрçăн аслă фрончĕн пур участокĕсенче те хăйсен сассисене параççĕ. Вĕсем çĕршыв чĕрине—Мускава хӳтĕленĕ çĕрте, Сталинград, Ленинград хулисем патĕнче, Севастопольпе Одессăра, Кавказ тăвĕсем патĕнче, Дон, Донец, Днепрпа Днестр шывĕсем урлă каçнă çĕрте çапăçнă; вĕсем Карпат хысакĕ урлă, Висла, Дунай, Тисса шывĕсем урлă каçнă; вĕсем, çĕршыври мĕнпур тăванла халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле алла-аллăн тăрса, хамăрăн Тăван çĕршывран нимĕç захватчикĕсене сирпĕтсе кăларчĕç; вĕсем халĕ фашистла тискер кайăка хăйĕн йăвинче шаккаççĕ: çав ылханлă ирсĕре пуçĕпех çапса вĕлермесĕр, вĕсем кĕрешӳ хĕçне аларан пăрахмаççĕ.

Пĕр дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсем чăваш халăхĕ патне янă çырура чăваш поэчĕ Ухсай Яковĕ, пĕтĕм паттăрсен шухăш-кăмăлне палăртса, çапла çырнă:

Тăван халăх, ăмăрткайăк,
Эсĕ шан ачусене.
Тĕнчере пĕлеççĕ лайăх
Теветкел чăвашсене.

Вырăсăн, марин, тутарăн
Сулĕ, шухăшĕ пĕрре.
Çавăнпа пырас хастаррăн
Ялачах кĕрешӳре.

Çапла пирĕн фронтри паттăрсем хамăр халăхăн чысĕпе чапне ӳкермеççĕ, вĕсем ăна хăйсен паттăр ĕçĕсемпе татах та çӳлерех çĕклеççĕ.

Нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн чăваш халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсене 20.000 çынна ытла Правительство орденĕсемпе медальсем парса наградăланă. Вĕсенчен чи паттăртараххисем—25 çын—Совет Союз Геройĕсен ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Эпир Ф. Орлов, М. Ефимов, Б. Васильев, П. Лаптев, генерал-майор А. Петров, И. Поляков тата ыттисен ячĕсемпе тивĕçлипех мухтанма пултаратпăр.

Совет Союз Геройĕ генерал-майор А. Петров ятне пирĕн Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. Сталин юлташ хăйĕн приказĕсенче пилĕк хутчен асăннă.

Чăваш республикинчи ĕçсыннисем, хăйсен фронтри паттăр ывăлĕсемпе мухтанса, вĕсен чаплă ячĕсене тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешеççĕ, тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçлĕхне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ; фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уйĕ хирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, пирĕн аслă çĕнтерĕве туптаççĕ. Çамрăк арçын ачасемпе хĕрсем, хăйсен аслăрах тăванĕсем—ашшĕсемпе пиччĕшĕсем ĕçленĕ станоксем умне тăрса, кучухнехи кăткăс техникăна вĕренсе алла илчĕç. Вĕсем ĕç тухăçлăхне, продукци туса кăларассине тăтăшах ӳстерсе пыраççĕ. Колхоз хресченĕсем вăрçă вăхăтĕнче тырпул тухăçлăхне чакармарĕç кăна мар, мирлĕ вăхăтринчен те ытларах ӳстерчĕç. Вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра та чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культурăна малалла аталантарса пырассишĕн республикăри интеллигенци ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Кузьма Минин вăхăчĕсенчи традицисене çĕнĕ вăй-хăватпа вăратса, республикăри ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума çулсерен нумай миллионшар тенкĕ укçа хывса пыраççĕ. Пĕр тĕслĕх кăна—вырăс колхозникĕ Андрей Сарсков чăваш халăхĕн ывăлĕ Совет Союзĕн Геройĕ Федот Орлов валли самолет туянса панине, тутар колхозникĕ Абдул Гаязов вырăс летчикĕ Совет Союзĕн Геройĕ Александр Кочетов валли самолет тума 110 пин тенкĕ укçа хывнă тĕслĕхе кăна илер! Çакă вăл хăех пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ мĕн тери çирĕппи çинчен, пĕр наци тепĕр нацин тивĕçлĕхне мĕн тери хисеплени çинчен калать.

Фронтри геройсемпе тылри паттăрсем çинчен, халăхсен туслăхĕ çинчен, пирĕн чăваш халăхĕн наци тивĕçлĕхĕ çак Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче мĕн тери вăйлă ӳссе кайни çинчен поэмăсемпе юрăсем, нумай томсем çырмалла. Анчах литературăпа искусствăра халăх паттăрĕсен сăнĕсене пачах та çителĕксĕр çутатса панă-ха. Çакă вăл пирĕн писательсемпе драматургсем, художниксемпе композиторсем хамăр тăван халăхăн наци тивĕçлĕхне, тăван çĕршыв умĕнчи парăма кирлĕ таранах туйса тăманни çинчен калать.

Çапла, эпир пирĕн чăваш халăхĕн наци тивĕçлĕхĕ истори тĕлĕшĕнчен мĕнле аталанса пынине, Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вăл татах та хăватлăнрах ӳснине кĕскен пăхса тухрăмăр. Историллĕ çулйĕр çакна кăтартса парать: пирĕн чăваш халăхĕ хăйĕн кунçулне, хăйĕн ăраскалĕпе телейне мĕн авалтанах аслă вырăс халăхĕпе çыхăнтарнă та, ют çĕршыв захватчикĕсене хирĕç, патша влаçне хирĕç, помещиксемпе капиталистсен пусмăрне хирĕç, тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн яланах вырăс халăхĕпе пĕрле, Совет Союзĕнчи ытти тăванла халăхсемпе пĕрле кĕрешсе пынă. Совет Союзĕнчи халăхсен нациллĕ традицийĕсемпе мĕнпур ĕçсыннисен ирĕклĕ пурнăç интересĕсем çинче никĕсленсе тăракан халăхсен туслăхĕ, совет патриотизмĕ тĕнчере никам çĕнтерейми вăй пулса тăчĕ.

«Вăрçă пынă вăхăтра—терĕ Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладра,—гитлеровецсем вăрçă тĕлĕшпе кăна мар, тата моральпе политика тĕлĕшĕнчен те поражени тӳсрĕç. Пирĕн çĕршывра çирĕпленсе çитнĕ мĕнпур рассăсемпе нацисен пĕртанлăхĕн идеологийĕ, халăхсен туслăхĕн идеологийĕ гитлеровецсен тискер кайăкла национализмĕн тата рассăллă курайманлăхĕн идеологине пĕтĕмĕшпех çĕнтерчĕ.

Халĕ, Отечественнăй вăрçă çĕнтерӳллĕ вĕçленесси патнелле пынă вăхăтра, совет халăхĕн историри вырăнĕ хăйĕн пĕтĕм пысăкĕшĕпе тухса тăрать. Совет халăхĕ хăйне шеллемесĕр паттăррăн кĕрешсе, Европăри цивилизацие фашистла аркатуçăсенчен çăлса хăварнине халĕ пурте йышăнаççĕ. Çакăнта пулать ĕнтĕ совет халăхĕн этемлĕх историйĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ питех те аслă ĕçĕ».

Çак çĕнтерӳре чăваш халăхĕ те хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнса тăрать. Фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлерсе, Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕкленĕ çĕрте те чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнĕç.

Аркадий ЭСХЕЛЬ.

Юлашки, Пуçламăшĕ 248-мĕш номерте.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Л. М. Каганович юлташа ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ пулса ĕçлеме лартнă, Çулйĕр Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

* * *

СССР Верховный Совет Президиумĕ Иван Владимирович Ковалев генерал-лейтенанта Çулйĕр Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04276. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.